**Усал-тĕсел, мана ан явăç…**

Усал-тĕсел, мана ан явăç.
Манпа пит урлă ан калаç.
Ман хӳтлĕх пур.
Таван Мăн Явăш.
Мана кĕтет вăл ир те каç.

Вăл çĕр çинче пуртан эп ятлă.
Çынпа пĕр хисепре, пĕр тан.
Эп айăпа кĕрсен, вăл ятлĕ,
Сăлтавĕ-тивĕçĕ пуртан.

Кунта эп тытнă сухапуçĕ.
Алла – пĕрремĕш кĕнеке.
Кунта эп пĕлтĕм ача пуçăн
Тĕрĕслĕхпе хĕн-инкеке.

Кунта малтанхи хут эп пĕлтĕм –
Мĕскер вăл пурнăç тараси.
Хăвна телейшĕн пар эс пĕтĕм,
Унран килет çын пуласси.

Эппин, ан сӳн, чĕре хĕлхемĕ,
Çутса тăр манăн ăшăма.
…Тăван кил çук çынна хĕрхенĕр,
Ăна чĕнсемĕр ăшанма.

*Воробьев, А. «Усал-тĕсел мана ан явăç...» : [сăвă] / А. Воробьев // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 180.*